Вĕрентекен çулталăкне халаллăнă уйăхсерен тухса тăракан кăларăм.

Ялти учитель

Хавхалантару шанăç çуратать

Вĕрентекен çулталăкне уçнине халаллăнă уяв мероприятийĕ (кăçал ăна январьти канашлупа пĕрлештерсе ирттерчĕç) Калайкассинчи вăтам шкулта иртрĕ. Районти вĕрентӳ учрежденийĕсен ертӳçисем, вĕрентекенсем, ветеран-педагогсем актовăй зала пухăнса пылак çимĕçпе чей лартнă сĕтелсем хушшине вырнаçрĕç. (Мероприятие ирттерме пулăшнăшăн «Сундырь-Хлеб» пĕрлешĕвĕн ертӳçине Л.Г. Ильгечкина тав сăмахĕ каларĕç.) Уяв çапла иртни лару-тăрава та хăтлăрах тума май пачĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Е. Андреева Муркаш районĕнче Вĕрентекен çулталăкне официаллă уçнине пĕлтерсе саламларĕ. «Учитель пуласси вăл – телейлĕ шăпа», – терĕ Алевтина Евстафьевна. Ку чăнах та çапла пулнине вара ветеран-педагогсем те çирĕплетсех пачĕç.

Районти вĕрентӳ ĕçĕн истори страницисене тишкернĕ май паянхи пурнăç ыйтăвĕсене те аякра тăратса хăварма пултараймарĕç педагогсем. Акă Чăваш Республикинчи вĕрентекенсен профсоюзĕн ертӳçи З.Н. Степанова та вĕсем çинче чарăнса тăчĕ. Кăçалхи çул ырă улшăнусем пуласса шаннине пĕлтерсе вăл хальлĕхе ялти вырăнта пурăнакан учительсем валли коммуналлă услугăсене тӳлессипе çыхăннă çăмăллăхсене сыхласа хăварма пултарнине пĕлтерчĕ. Профсоюз

организацийĕнче тăракан педагогсем валли ятарлă дисконтлă карттăсем хатĕрлес шухăша та пурнăçа кĕртме шутлаççĕ. Çак карттăсемпе вара педагогсем льготăллă услугăсемпе усă курма пултараççĕ. Грантсене çĕнсе илес конкурс пирки каланă чух вара Зинаида Николаевна республикăри профсоюз комитечĕ те хăйĕн ячĕпе пĕр грант тăратма шантарчĕ. Мĕншĕн тесен кăçал Раççейре те пĕтĕмĕшле 1000 грант кăна пулĕ (малтанхи çулсенче вара 10000 грант пулнă), унăн калăпăшĕ вара ўсĕ. Апла пулсан пирĕн республикăри вĕрентекенсен нумайран та 10 грант таран çеç çĕнсе илме майсем пулĕç. Вĕрентекенсене санаторисенче канма условисем пуррине аса илтерчĕ Зинаида Николаевна. Профсоюз панă путевкăсем ахаль те йӳнĕрех хакпа пулаççĕ. Кунсăр пуçне тата профсоюз организацийĕсем канма каяс текен педагога пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшу парса çак хака татах чакарма пулăшаççĕ, апла пулсан вĕрентекенĕн сывлăх пирки манмалла мар. Ĕçлеме пĕлет пулсан вăл, унăн канма та пĕлмелле.

Сывлăха мала хумалли пирки Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕн çумĕ О.Ю. Попова та аса илтерчĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн попечительсен канашĕн ертӳçи Н.Г. Ванеркин та вĕрентекенсене саламласа хавхаланса ĕçлеме сунчĕ.

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова кăçалхи çул уйрăмах активлă учительсем ытларах пуласса шаннине пĕлтерчĕ, çамрăк специалистсем шкулсенче сахал пулнине аса илтерчĕ. Ку ыйтăва татса пама тăрăшаççĕ, паллах, анчах та пĕтĕмпех вĕрентӳ пайĕнчен çеç килмест çав.

Вĕрентекенсене çак кун район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов саламласа ырлăх-сывлăхпа вăй-хăват, ăнланулăх сунчĕç. Малалла пĕрле, пĕр тĕллевпе ĕçлемеллине палăртрĕç.

Патшалăх уйрăм професси çыннисене алă тăсса пачĕ пулсан, çак специалистсен те вĕрентӳ ĕçне çӳллĕрех шая çĕклес тесе тăрăшмалла.

Вырăс хĕрĕ чăвашсен хисепне тивĕçнĕ

«Ятлă çынна ял савать», – тенĕ ваттисем. Ятлă çын пулни, паллах, ял халăх хисепленине пĕлтерет. Мухтава тивĕçнĕ çын Якаткасси ялĕнче те пур. Вăл пирĕн кӳршĕ – Нина Николаевна Тимофеева. Педагогика ĕçĕн ветеранне таврара пĕлмен çын çук та пулĕ.

Нина Николаевна Курск облаçĕнче çуралса ўснĕ. Учитель пулма вĕренсе тухсан ăна Чăваш Енри яла, Якаткасси шкулне ачасене вĕрентме яраççĕ. Нина Николаевна шкулта çут çанталăк, биологи, хими, географи предмечĕсене вĕрентсе ăс панă ачасене. Малтанах вырăс хĕрĕ, паллах, вырăсла кăна каласа çăмăлланă, кайран чăвашла та тикĕс каласа вĕренсе çитнĕ. Çавăнпа ялта ăна чунĕпе чăваш теççĕ.

Ачасене Нина Николаевна чунне парса вĕрентнĕ. Ачасем те ăна юратнă, урокĕсене те юратса вĕреннĕ. Уйрăмах вĕсем шкул çумĕнчи лаптăкра Нина Николаевнапа чечек, пахча çимĕç лартса ўстерес ĕçе хутшăнма кăмăлланă: çумне те çумланă, çĕрне те кăпкалатнă тата ытти те. Çапла Нина Николаевна ачасене ĕçлеме те вĕрентнĕ. Ахальтен мар вăл ĕçтешĕсем, ачасемпе ашшĕ-амăшĕсем, ял халăхĕ хушшинче пысăк хисепре.

Халĕ пултаруллă педагог тивĕçлĕ канура. Апла пулин те вăл ĕçлемесĕр алă усса лармасть: выльăх-чĕрлĕх пăхать, пахча çимĕç лартса ўстерет. Упăшкипе, Владислав Димитриевичпа, хĕрпе ывăлне ăс-тăн парса ура çине тăратнă. Халĕ вара мăнукĕсемпе йăпанаççĕ. Алă усма вăхăт çук, икĕ алла пĕр ĕç.

Ольга КОЛОСЬЕВА,
Чуманкасси шкулĕ, 7 класс.

Пуçаруллă та хастар

Валентина Валентиновна Гурьева, Светлана Михайловна Тушилкина тата Валентина Львовна Михайлова Мăн Хураçкари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта вăй хураççĕ. Хăйсен ĕçĕнче компьютер технологийĕсемпе анлăн усă курнипе, вĕрентӳ ĕçне пурнăçпа çыхăнтарса пынипе вĕсен урокĕсем ачасемшĕн интереслĕ иртеççĕ.

Акă Валентина Валентиновнан – физикăпа информатика вĕрентекенĕн – çитĕнĕвĕсен хутаççинче 50 пин тенкĕлĕх республика шайĕнчи гранта çĕнсе илни те пур. Светлана Михайловнан та (вăл вырăс чĕлхипе литературин предмечĕсене ертсе пырать) конкурссене хутшăнса призлă вырăнсем çĕнсе илни çук мар. Районта çулсеренех иртекен «Чи лайăх класс ертӳçи» ят пурри те ăна, унăн вĕренекенĕсене те малаллах хавхалантарса пырать. Акă кăçалхи «Эпĕ – Раççей гражданинĕ» районти социаллă проектсен конкурсĕнче те вăл ертсе пынипе вĕрентекенсем малтисен шутĕнче пулчĕç. Валентина Львовна вара тăван чĕлхене, литературине вĕрентес ĕçре компьютер технологийĕсемпе питĕ анлăн усă курать. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче унăн компьютер технологийĕсене усă курса ирттернĕ урокне районта виççĕмĕш вырăн парса хаклана.

Вĕрентӳ ĕçне – общество тимлĕхĕ

Вĕрентӳ ĕçне общество хутшăнасси тата ăна тимлĕх уйăрасси 2006 çултанпа пулса пырать: шкулсенче, ача сачĕсенче те ертсе пыракан канашсем, попечительсен канашĕсем ĕçлеççĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн те хăйĕн попечительсен канашĕ пур. Унăн председателĕ пулма Н.Г. ВАНЕРКИНА («Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ертӳçи) шаннă.

Асăннă канашсенче авторитетлă, пуçаруллă тата вĕрентӳ учрежденийĕсене пулăшма пултаракан çынсем пулмаллине пытармасть Николай Григорьевич. Çапла пулсан вĕрентӳ ĕçне инвестицисем те хывма май пур. Бизнес сферинче вăй хуракансем вĕрентӳ ĕçĕпе чăннипех те интересленни вара шкулсен пурлăх базине пуянлатма, вĕренекенсене хавхалантарса пымалли мелсем те хушать. Николай Григорьевич каланă тăрăх, попечительсен канашĕсен тĕллевĕсенчен пĕри – вăйлă ертӳçĕсене, предпринимательсене вĕрентӳ ĕçĕпе интереслентерсе ярасси тата унта явăçтарасси.

– Пур вĕрентӳ учрежденийĕсенче те çак канашсем пур-и? Хăш вĕрентӳ учрежденийĕсенчи попечительсен е ертсе пыракан канашсем аван ĕçлесе пыраççĕ-ха?

– Районти пур вĕрентӳ учрежденийĕсенче те çак канашсене 2006 çултах йĕркеленĕ, ертӳçисене те суйланă. Вĕсем хăйсен вĕрентӳ учрежденийĕсене, паллах, пулăшу пама тăрăшаççĕ.

Анчах та, темĕнле ĕç пулсан та, танлаштармалли ку ĕçре те çук мар. Пирĕн районти вĕрентӳ учрежденийĕсене илес пулсан, малтанах Мăн Сĕнтĕр (В.И. Кожанов), Оринин (В.И. Вязов), Калайкасси (В.С. Рубцов), Сосновка (И.В. Николаев) шкулĕсенчи ертсе пыракан тата попечительсен канашĕсен аван ĕçне палăртас килет. Ытти шкулсенче те çак ĕçе çӳллĕрех шая хăпартса пыма тăрăшаççĕ. Пĕтĕмлетсе каласан вара (канашсене ертсе пыракансем тĕрлĕ сферăсенче ĕçлени, вĕсен ўсĕмĕсем те тĕрлĕ шайра пулнăран) вĕрентӳ ĕçне хутшăнасси те пĕр пек пыма пултараймасть.

– Апла пулсан вĕрентӳ ĕçне общество хутшăнассинче те пĕр-пĕрин опычĕпе паллашса, пĕр-пĕринпе канашласа ĕçлемелле?

– Ку, паллах çапла пулмалла. Вĕрентӳ ĕçне хутшăнакансем пĕр-пĕрин ĕçĕпе паллашни вăл никамшăн та ытлашши мар. Эпир хамăрăн ĕç пирки вĕрентекенсен çулталăкра икĕ хутчен иртекен канашлăвĕнче те тухса калаçатпăр. Хамăр хушăра та опытпа паллашатпăр, шкулти мероприятисене те хутшăнатпăр. Çакă вара эпир пурнăçлакан ĕçе малалла мĕнле йĕркелесе пымаллине курăмлăрах тума май парать.

– Вĕренекенсене хавхалантарасси пирки маларах асăнтăмăр. Учительсен те халĕ ĕç укçин калăпăшне хавхалантару пайĕ кĕрет. Ертсе пыракан канашсем, попечительсен канашĕсем çак ĕçе те хутшăнаççĕ вĕт-ха?

– Çапла. Педагогсен ĕç укçин калăпăшне халĕ хавхалантару пайĕ те кĕрет. Унăн калăпăшне палăртас ĕçе эпир тўрремĕнех хутшăнатпăр. Вĕрентекенĕн ĕçне, унăн ўсĕмĕсене, унăн вĕренекенĕсен çитĕнĕвĕсене тишкерсе çак хавхалану пайĕ мĕнле пулмаллине шкул администрацийĕпе пĕрле палăртатпăр.

Вĕсене тишкерсе тухса пĕрремĕш çур çула валли попечительсен канашĕ критерисене çирĕплетме сĕнчĕ. Иккĕмĕш çур çулта вара критерисен шутне улшăнусем кĕртме палăртрĕç.

Çапла вĕрентӳ тытăмĕнче общественность хутшăннипе палăрăмлă ĕçсем пулса пыраççĕ. Ку вара вĕрентекенсене тăтăшах квалификацие ўстерме, тарăнрах пĕлӳ пама тата ĕçе тĕплĕн пурнăçлама хистет.

Студентсен йышĕнче

Çитес тунти кун, январĕн 25-мĕшĕнче, Раççей студенчĕсем хăйсен уявне паллă тăваççĕ. Пирĕн районта та çак куна чылай студент уявлама хатĕрленет, уйрăмах кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пĕрремĕш курс студенчĕ пулса тăнисем.

Акă районти вĕрентӳ пайĕн специалисчĕ А. Данилова пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çулта шкул пĕтернисенчен студентсен ретне 432 çамрăк тăнă. Вĕсенчен 141 çамрăк 9 класс хыççăн пуçламăш професси тата вăтам професси паракан вĕрентӳ учрежденийĕсенче – 181 вĕренекен.

Ĕнерхи студентсем пирки те каласа хăвармалла. Пĕлтĕрхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен , сăмахран, районти вĕрентӳ тытăмне 5 çамрăк специалист ĕçлеме килчĕ. Вĕсем: О.В. Владимирова – Мăн Хураçкари шкулта технологи тата рисовани урокĕсене вĕрентет, И.Б. Семенова – Ильинка шкулĕнче воспитатель пулса тăрăшать, А.Е. Иванова – Юнкă шкулĕнче информатика урокĕсене ертсе пырать, Н.Н. Бакина – Шатракассинчи шкулта акăлчан чĕлхине вĕрентет, Н.В. Идакова – Москакассинчи шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет тата аслă вожатăй пулса ĕçлет.

Проектсене хўтĕлерĕç

Вĕрентекен вĕренекенсĕр пулмасть. Ку паллă. Вĕрентекенĕн ĕçри ўсĕмĕсем те унăн вĕренекенĕсен çитĕнĕвĕсенче, вĕсен пĕлӳ шайĕ епле пулнинче тата тĕрлĕ конкурссене хутшăннинче курăнаççĕ. Çакна январĕн 20-мĕшĕнче иртнĕ шкул ачисен Пĕтĕм Раççейри 10-мĕш «Эпĕ – Раççей гражданинĕ» акцин районти тапхăрĕ те çирĕплетсе пачĕ. Акцие хутшăнса вĕренекенсем пурĕ 22 социаллă пĕлтерĕшлĕ проект хўтĕлерĕç.

Çак ĕççене шкул ачисем хăйсен вĕрентекенĕсемпе çырса хатĕрленĕ. Проектсенче тĕрлĕ ыйтусем хускатрĕç. Хăйсем суйласа илнĕ тема паянхи социаллă пурнăçра (ял тăрăхĕ, район тата республика шайĕнче те) пысăк вырăн йышăннине кăтартса пама тăрăшрĕç вĕренекенсем. Шел пулин те, проект мелĕпе ĕçлесси хальлĕхе, пĕтĕмĕшле илсен, шкулсенче йывăртараххăн пыни курăнчĕ. Çакă ачасем проект мĕн иккенне ăнлансах кайманнинче палăрчĕ. Ку вара вĕрентекенсен хăйсем палăртса хунă ĕçсем çумне ачасене проектсем çырма хăнăхтарас ĕçе те хушса хурать. Çак мелпе ĕçлесси паян питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ-çке.

Тата акă мĕн асăнса хăвармалла. Ытти чухне малтисен ретĕнче пыракан Муркаш тата Калайкасси шкулĕсенче вĕренекенсем çак конкурса хутшăнманни те çитменлĕх пулса тăчĕ.

Жюри членĕсем кашнинех хак парса вăйлисене палăртрĕç. Чи лайăх проектсен шутĕнче – Чуманкассинчи вăтам шкулта (проект ячĕ – «Шкулти биоэкономика»), Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта («Астăвăм паркĕ») тата Мăн Хураçкари тĕп шкулта («Этикет службине туса хурасси») вĕренекенсен ĕçĕсем.

Кăларăма Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.